26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943 НОЯБРЬ 16 ЫТЛАРИКУН 227(6464) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери [illegible]

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

VI-мĕш Сесси хушнисене чыслăн пурнăçа кĕртер

Кăсалхи ноябрĕн 10—11-мĕшĕсенче Чăваш АССР-ĕн 1-мĕш созыври Верховный Совечĕн VI-мĕш Сессийĕ пулса иртрĕ.

Сесси Чăваш республикин хуçалăхпа политикăллă пурнăçĕнче пысăк вырăн йышăнса тăракан ыйтусене: Чăваш АССР-ĕн бюджетне 1943 çулхи виçĕ квартал хушшинче мĕнле пурнăçа кĕртни çинчен тата пурне те [illegible] хут вĕрентмелли закона мĕнле пурнăçлани çинчен пăхса тухса, тивĕçлĕ постановленисем йышăнчĕ.

Чăваш АССР-ĕн бюджетне 1943 çулхи виçĕ квартал хушшинче [illegible] Сесси республика бюджечĕ 9 уйăх хушшинче çитĕнĕскере пурнăçа кĕрнине палăртрĕ. Чăваш республикин Совнаркомне кăçалхи бюджета пĕтĕмĕшпех пурнăçа кĕртмелле тума, бюджет тăрăх палăртса хунă хуçалăх-культурăллă тата хуçалăх мероприятисене валли пĕр чăрмавсăр укçа-тенкĕ парса тăмалла тума хушса хăварчĕ.

Хамăрăн юратнă тăван çĕршыва ирсĕр нимĕç захватчикĕсенчен хăвăртрах ирĕке кăларас тесен, малалла — Хĕвеланăçнелле тапăнса пыракан геройла Хĕрлĕ Çара пур енĕпе те татти-сыпăксăр [illegible] мĕнпур вăйĕпе средствисене мобилизацилес пулать.

Пирĕн республикăри ĕççынисем, колхоз уйхирĕсенче, фабрикăсемпе заводсенче пĕтĕм вăя хурса ĕçлесе пĕрлех, фронта тăван çĕршыва хăйсен укçи-тенкисемпе те пулăшса тăраççĕ. Республикăри ĕççынисем иккĕмĕш Военнăй Заема 137.427.000 тенкĕлĕх, укçа-тенкĕпе япаласен лотерейин билечĕсене 31 миллион тенкĕлĕх сыранса илчĕç. Çакă вăл республика бюджетне пысăк тупăш кÿрет.

Вăрçă валли укçа-тенкĕ çителĕклĕ парса тăрас тесен, партипе правительство финанс органĕсем умне пысăк требованисем лартрĕç. Пирĕн вăрçă вăхăтĕнчи бюджета пĕр чарăнмасăр пурнăçа кĕртсе пымалла.

Государство бюджечĕ вăл—государствăн финанс планĕ пулса тăрать. Ана пурнăçа кĕртнинчен пĕтĕм халăх хуçалăхĕнчи, вăрçăпа политикăн тĕллевĕсене задачисене ăнăçлăн татса парасси килет.

Тăхăр уйăх хушшинче Чăваш республикин бюджетне тупăшсем енĕпе 70,4 процент, расходсем енĕпе — 61,5 процент чухлĕ пурнăçа кĕртнĕ. Çакна ăна илнĕпе те çителĕклĕ теме çук.

Хуçалăх наркомачĕсем управленисем, промышленность предприятийĕсем, вырăнти совет тата финанс органĕсем производствăпа финанс планĕсене тултарассишĕн çителĕксĕр ĕçлени пула, 9 уйăх хушшинче бюджета пĕтĕмпе 6.912.400 тенкĕ сахалтарах укçа панă. Çакă вăл — пысăк сумма.

Бюджет умĕнчи хăйсен обязательствисене çаксем уйрăмах начар пурнăçласа пыраççĕ: Наркомлес предприятийĕсем плана 34,4 процент çеç тултарнă, коммуналлă хуçалăх предприятийĕсем — 60 процент, суту-илÿ Халăх Комиссариачĕн системи— 62,4 процент, уйрăмăн илсен, Чăвашторгпа столовăйсен тресчĕ бюджетăн доход пайне — 64,4 процент кăна пурнăçланă. Стройтрестăн бюджета виçĕ квартал хушшинче 280 пин тенкĕ памалла пулнă, вăл пурĕ те 33 пин тенкĕ çеç панă, плана 11,8 процент кăна тултарнă. Çакă вăл пĕтĕмпех Стройтрест хăйĕн ĕç программине пурнăçа кĕртсе пыманнинчен килнĕ. Коммуналлă хуçалăх наркомачĕн Шупашкарти электростанцийĕ те плана пурнăçа кĕртсе пымасть. Электростанци начар ĕçленĕ пирки хулари 6 предприяти кăна бюджета 4.433 пин тенкĕ сахалтарах укçа панă.

Комсомольски, Хĕрлĕ Чутай, Кувакино, Первомайски тата Канаш районĕсем государство тупăшĕсен планне çулсеренех пурнăçа кĕртсе пымаççĕ. Çав районсенчи райсовет исполкомĕсемпе финанс работникĕсем предприятисен, артельсен тата суту-илÿ организацийĕсен ĕçне начар контроллесе тăраççĕ.

Бюджета вăхăтра укçа хывмалла, вăрçă кунĕсенче государство умĕнче пĕр кунлăха та парăмлă пулмалла мар; хуçалăх руководителĕсен производство ĕçĕпе, хăйсен предприятийĕсен экономикипе ытларах интересленмелле, ку тĕлĕшпе партин XVIII-мĕш конференцийĕ кăтартса панисене пурнăçа кĕртсе пымалла.

Налогпа страховани укçине вăхăтра пухас пулать, заем укçине çырăннă чухлех пухса çитермелле. Анчах хăшпĕр районсем ку тĕлĕшпе начар ĕçлеççĕ-ха; Налог пухмалли виççĕмĕш кварталти плана Пăрачкав районĕ — 56,4 процент, Хĕрлĕ Чутай — 50,2 процент, Çĕмĕрле—43,3 процент, Кувакино, — 42,8 процент кăна тултарнă. Отечественнăй вăрçă инвалидĕсене, Хĕрлĕ Çара мобилизациленисен хуçалăхĕсене çăмăллăхсем парас тĕлĕшпе Комсомольски, Çĕмĕрле, Канаш, Тăвай районĕсем начар ĕçлеççĕ. Ирĕклĕ страховани ĕçĕ Сĕнтĕр, Советски, Йĕпреç, Тăвай районĕсенче япăх пырать.

Финанс органĕсем бюджетпа укçа-тенкĕсене учрежденисемпе организацисем, предприятисемпе хуçалăх органĕсем малалла мĕнле расходланине кулленех контроллесе тăмаççĕ.

Бюджетран укçа-тенкĕсене çителĕксĕр усă курни тĕп сăлтавĕ çакăнта: чылай наркомат тата управленисем, районсемпе хуласенчи совет исполкомĕсем строительство программине пурнăçа кĕртесшĕн, [illegible] пĕтĕмĕшпех тупса çитерессишĕн [illegible] ытти чылай мероприятисене пурнăçа кĕртессишĕн тĕревлĕ мерăсем йышăнман.

Сăмахран, Наркомместпромăн районри предприятийĕсене малалла аталантарма бюджетра 85 пин тенкĕ панă, çав укçапа пĕр пус те усă курман. Хуласемпе район центрĕсене юсаса йĕркелеме панă укçа-тенкĕрен 383 пин тенкĕ усă курман юлнă. Социаллă-культурăллă мероприятисене [illegible] 68 процент кăна. халăха çутта кăларас ĕç валли панă укçаран 61,5 процент кăна расходланă. Ялсенче шкулсем тума панă 210 пин тенкĕ укçаран пĕр пус та усă курман. [illegible] 134 пин тенкĕ укçаран 23 пин тенкĕ çеç расходланă. Вулав çурчĕсен, библиотекăсен, культура çурчĕсен ĕçне йĕркелеме панă укçаран 35,2 процент чухлĕ, социальнăй обеспечени енĕпе 48,5 процент чухлĕ укçа кăна усă курнă. Çавăн пекех сывлăха сыхлас ĕç енĕпе те нумай мероприятисене пурнăçламасăр хăварнă.

Совет государстви халăха çутта кăларас, шкулсене культура çуртне [illegible] миллионшар тенкĕ укçа парать. [illegible]

Ачасене пурне те обязательнăй хут вĕрентесси пирĕн çĕршывра пĕтĕм халăх ĕçĕ, государство ĕçĕ пулса тăчĕ. Кăçалхи вĕренÿ çулĕнче пирĕн республикăри шкулсенче вĕренме пĕтĕмпе 157.813 ача вĕренет, çав [illegible] валли государство 44.700 пин тенкĕ укçа уйăрса панă.

Чăваш республикинчи Элĕк, Хĕрлĕ Чутай, Сĕнтĕр, Елчĕк, Çĕрпÿ районĕсем пуçламĕш шкулсенче вĕренме ачасене пурне те явăçтарнă, Канаш хулинче вара ачасене 7 çул вĕренме те пурне те явăçтарнă.

Анчах пирĕн шкул тулашĕнче юлнă ачасем те чылай-ха. Пуçламĕш шкулсенче вĕренме тивĕçлĕ ачасенчен 727 ача, хуласенче çичĕ çул вĕренме тивĕçлĕ ачасенчен 82 ача шкул тулашĕнче юлнă. Ачасене шкула çÿретес ĕç уйрăмах Улатăр, Етĕрне, Шăмăршă, Пăрачкав тата Куславкка районĕсенче начар пулса пырать.

Ачасене шкула явăçтарни вăл всеобучăн пуçламĕшĕ кăна-ха, уйрăмах ачасем вĕренме пăрахассинчен сыхланмалла. Çавăнпа вырăнти советсемпе çутĕç органĕсен ачасене йĕркеллĕ вĕренме пур условисене те туса памалла.

Етĕрне, Çĕрпÿ, Çĕмĕрле, Чкаловски районсем шкулсенче занятисем пуçланнă тĕле шкул çурчĕсене юсаса çитерейменĕç. Чкаловски район шкулсене çулталăкра кирлĕ вуттăн икĕ процентне кăна, Сĕнтĕр районĕ 7 процент, Шăмăршă районĕ 10 процент, Элĕк районĕ 11 процент кăна турттарса хунă.

Сесси всеобуч ĕçĕнчи пысăк çитменлĕхсене кăтартса парса, çутĕç органĕсене, райисполкомсемпе ялсовечĕсене всеобуч законне пурнăçлас, шкулсен ĕçне лайăхлатас, учительсене ăнăçлăн ĕçлеме пур условисене те туса парас тĕлĕшпе татăклă мероприятисем йышăнма хушса хăварчĕ.

Чăваш АССР Верховный Совечĕн VI-мĕш Сессийĕ йышăннă решенисемпе постановленисем наркоматсемпе хуçалăх организацийĕсемшĕн, райисполкомсемпе ялсовечĕсемшĕн закон пулса тăраççĕ, вĕсене чыслăн пурнăçа кĕртмелле.

Совет Информаци Бюровĕнчен

НОЯБРĔН 13-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

УКРАИНĂРИ 1-мĕш фронт çарĕсем ноябрĕн 13-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле, вирлĕн наступлени туса пырса, Украинăри область центрне —ЖИТОМИР хулине пысăк чугун çул тĕввине тытса илнĕ. Ноябрĕн 13-мĕшĕнче çав фронтри çарсемех Житомир облаçĕнчи район центрĕсене — МАЛИН хулине чугун çул станцине, ЧЕРНЯХОВ хулине, ПОТИЕВКА ялне тата Киев облаçĕнчи РОЗВАЖЕВ ятлă район центрне тытса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 100 пункта ытла йышăнса илнĕ. Вĕсен шутĕнче — ФЕДОРОВКА, РАДЕНКА, КОРОЛЕВКА, ВОЛЧКОВ, ЗАЛИШАНЫ, СИДОРОВИЧИ, ОЛИЗАРОВКА, ВОРОВСК, РУТВЕНКА, НОВЫЕ ВОРОБЬИ, СЕЛИЩЕ, ЯНОВКА, БУДИЛОВКА, ЖАДЬКИ, ГОРБУЛЕВ, ВЫДЫБОР, СТЫРТЫ, ДЕВОЧКИ, ВЫСОКО-УКРАИНСКОЕ, ТРОКОВИЧИ, ВЕРЕСЫ ятлă пысăк ялсем пур. ФАСТОВ районĕнче фронт çарĕсем çаплах тăшман пехотипе танкĕсен контратакисене сире-сире янă.

КЕРЧЬ çурутравĕ çинче пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтере-çĕнтере тата унăн контратакисене сире-сире ярса, малтанхи районсенчи плацдармсене аслăлатасшăн çапăçнă.

РЕЧИЦĂРАН кăнтăртарахра пирĕн çарсем ДНЕПР шывĕн сылтăм енчи плацдарма аслăлатасшăн çапăçнă, тăшманăн вăйлă çирĕплетнĕ ХОЛМЕЧЬ, ДВОРЕЦ, КРАСНОПОЛЬЕ, АРТУКИ, ВОЗНЕСЕНСК, КАЗАНОВКА, ГРУШОВКА, ИВАНКОВА, ГРОХОВО, СТАРАЯ ОЛЬШЕВКА, НОВАЯ ОЛЬШЕВКА, ДОМАМЕРКИ ятлă тĕреклĕ пункчĕсене тытса илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведка тунă тата тăшмана хирĕç артиллерипе миномётсенчен персе тăнă.

Ноябрĕн 12-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 111 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата çÿлелле перекен артиллери тăшманăн 33 самолетне персе ÿкернĕ.

НОЯБРĔН 14-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

УКРАИНĂРИ 1-мĕш фронт çарĕсем ноябрĕн 14-мĕшĕнче çаплах наступлени туса пынă, Житомир облаçĕнчи ЧЕПОВИЧИ ятлă район центрне тытса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 50 пункта ытла йышăнса илнĕ. Вĕсен шутĕнче БОБЕР, ШКНЕВА, ГОЛУБНЕВИЧИ, МЕЖЕЛИСКА, МАРЬЯТИН, ДУБРОВА, БАРАНОВКА, ГУТА ЛУГАНИВСКАЯ, ДЕРМАНКА, ВИХЛЯ, БРАЖИНКА, ВОРОВ, МОКРЕНЩИНА, КЛЕТИЩЕ, ВЕРБОЛОЗЫ, ВЫШПОЛЬ, КАМЕНКА, ЯНУШЕВИЧИ, БАРАШЕВКА, АЛЬБИНОВКА, СЛОБОДА, СЕЛЕЦ, ПРЯЖЕВ, ПСКИ ятлă пысăк ялсем пур. Фастов районĕнче çав фронт çарĕсем тăшманăн пехотипе танкĕсен контратакисене ăнăçлăн сире-сире янă.

КЕРЧЬ çурутравĕ çинче пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтере-çĕнтере тата унăн контратакисене сире-сире ярса, нимĕçсен вăйлă çирĕплетнĕ АДЖИМ-УШКАЙ тата КОЛОНКА ятлă тĕреклĕ пункчĕсене тытса илнĕ.

РЕЧИЦĂРАН кăнтăртарахра пирĕн çарсем ДНЕПР шывĕн сылтăм енче плацдармсене аслăлатасшăн çапăçнă, тăшмантан вăйлă çирĕплетнĕ КОЛОЧИН, ВЕЛИН, ЛЕВАШИ, ИВАНИЩЕ, ВЕТХИН, ОРЕЛ, ЯНОВКА, ГАСТИВЕЛЬ, ПАСЕКА, ПЕРРЕМЕШ БЕРЕЗОВКА, ИККĔМĔШ БЕРЕЗОВКА, СМОГОРИНО, ЗАРЕЗОВА, БУДА ПЕТРИЦКАЯ ятлă тĕреклĕ пунктсене тытса илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведка тунă тата тăшмана хирĕç артиллерипе миномётсенчен персе тăнă.

Ноябрĕн 13-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 71 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата çÿлелле перекен артиллери тăшманăн 8 самолетне персе ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

Украинăри 1-мĕш фронт çарĕсем çаплах наступлени туса пынă. Пĕр соединени чаçĕсем, малалла куçса пырса, халăх пурăнакан темиçе пункта, вăл шутра Житомир облаçĕнчи Чеповичи ятлă район центрне тытса илнĕ, 800 нимĕç салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем тытса илнĕ. Каялла чакакан тăшмана хăваласа пырса, совет боецĕсем нимĕçсем Германи каторгине хăваласа каякан 4.000 мирлĕ совет гражданне ирĕке кăларнă. Пирĕн кавалеристсем, тăшманпа хаяррăн çапăçса, гитлеровецсене пĕр батальон ытла пĕтерсе тăкнă, 30 танк тытса илнĕ, нимĕçсен чылай салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ. Фастов районĕнче совет çарĕсем тăшман контратакисене ăнăçлăн сире-сире янă. Пĕр участокра пирĕн танкистсемпе пехотинецсем, тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкса, пĕр ял тытса илнĕ. Нимĕçсем умлăн-хыçлăн тăватă хут хаяр контратака тунă, тăшманăн контратакисене пурне те сирсе янă. Çав çапăçура 500 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсен 48 танкне, хăй тĕллĕн çÿрекен 7 туппине çунтарса янă е персе çĕмĕрнĕ тата 60 автомашинăна пĕтерсе тăкнă.

* * *

Керчь çурутравĕ çинче пирĕн çарсем малтанхи районсенчех плацдармсене аслăлатасшăн çапăçнă. Керчь хулинчен çурçĕр хĕвелтухăçнерехре пĕр соединени боецĕсем тăшманăн пехотипе танкĕсен тата хăй тĕллĕн çÿрекен тупписен 11 контратакине сирсе янă. Вăйлă çапăçнă хыççăн пирĕн çарсем нимĕçсен вăйлă çирĕплетнĕ Аджим-Ушкай тата Колонка ятлă пункчĕсене тытса илнĕ. Çав пунктсемшĕн пынă çапăçусенче тăшманăн 900 салтакĕпе офицерне вĕлерсе пĕтернĕ тата темиçе танк пĕтерсе тăкнă. Керчь хулинчен кăнтăртарахра пирĕн разведка тăвакан отрядсем активлăн кĕрешнĕ.

* * *

Речицăран кăнтăртарахра, Днепр шывĕн сылтăм енче, пĕр чаçри боецсем нимĕçсен тĕреклĕ пунктне çавăрса илнĕ те ăна кăнтăр енчен тата хĕвеланăç енчен атакăланă. Тăшман васкасах каялла чакнă. Çапăçу хирĕнче тăшман салтакĕсемпе офицерĕсен 320 вилли выртса юлнă. Нимĕçсенчен хăй тĕллĕн çÿрекен 5 тупă, 8 хир туппи, 40 пулемет тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур. Пĕр соединени чаçĕсем, нимĕçсем хирĕç тăнине çĕнтере-çĕнтере, малалла куçса пынă, вăйлă çирĕплетнĕ халăх пурăнакан темиçе пункта тытса илнĕ. Çав пунктсемшĕн пынă çапăçусенче тăшманăн 1.500 салтакĕпе офицерне çити вĕлерсе пĕтернĕ, 15 танк, хăй тĕллĕн çÿрекен 3 тупă тата темиçе артиллери батарейине пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем тытса илнĕ. Вĕсен шутĕнче 2 танк, 4 бронемашина, 16 тупă, боеприпассен склачĕ тата 30 автомашина пур.

* * *

Хура тинĕс флочĕн карапĕсем тăшманăн 5.000 тонна таякан суднине шыва путарнă. Хура тинĕс флочĕн летчикĕсем тăшманăн 1.500 таякан суднине, пĕр тральщикне тата хурал тăракан катерне шыва путарнă.

* * *

Крымра кĕрешекен партизансен отрячĕ ноябрь уйăхĕн пуçламĕшĕнче нимĕçсен горючи турттарса пыракан чугун çул эшелонне минăсем лартса сирпĕнтерсе янă, çав крушение пула тата тухнă пушара пула темиçе çĕр тонна бензин пĕтнĕ. Чугун çулăн çак участокĕнче поездсем çÿресси 20 сехете чарăнса ларнă. Тепĕр участокра партизансен ушкăнĕ нимĕçсен 2 çар эшелонне ÿпĕнтерсе янă. Совет патриочĕсем гитлеровецсене тусем хушшине илĕртсе кайнă та нимĕçсен фашистла оккупанчĕсене 60 çынна пĕтерсе тăкнă.

* * *

Керчь хули районĕнче нимĕçсен 920-мĕш гренадерски полкри 11-мĕш ротăран Томаш салтака тыткăна илнĕ. Вăл çапла каласа кăтартнă: «Пирĕн полк Францири Нант хули районĕнчи çыраноене сыхласа тăратчĕ. Сентябрь уйăхĕн вĕçĕнче çак полкри 11-мĕшпе 12-мĕш ротăсене ытти ротăсенчи салтаксене, вăрçăра пулнăскерсене, васкаса хушса пачĕç. Унтан офицерсем çапла каларĕç: сире Хĕвелтухăç фронтне яраççĕ, терĕç. Çак пĕлтерÿ салтаксене темĕн пекех хăратса ячĕ. Кашнинех ăна карланкинчен çĕçĕпе чикме тăнă пекех туйăнса кайрĕ. Пурте çакна ăнланса илчĕç: командовани çыран хĕрринчи салтаксене илсе Хĕвелтухăç фронтне ярать пулсан, вара вăл пирĕн ĕçсем Российăра питĕ начаррине пĕлтерет. 11-мĕш рота Атлантика çыранĕсенче 7 километр тăршшĕнчи участока сыхласа тăратчĕ. Пирĕн пурăнма унта питĕ çăмăлччĕ, эпир нимĕн çинчен те шухăшламан. Кунта эпир Крымра капкăна кĕрсе ÿкрĕмĕр, ку капкăнран никам та вĕçерĕнсе тухаймасть пулмалла».

* * *

Могилев облаçĕнчи Игнатовка ялĕнчи çынсем нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем тунă тискер ĕçсем çинчен çапла каласа кăтартнă: «Пирĕн яла кĕрсе кайсан, нимĕçсем ялти халăха ним юлмиччен çаратса тухрĕç. Гитлеровецсем пуç пулса пурăннă вăхăтра пирĕн пурнăç калама çук япăхчĕ, пирĕнтен тискеррĕн мăшкăллатчĕç. Анчах та 1943-мĕш çулхи февралĕн 2-мĕшĕпе 3-мĕшĕнче гитлеровецсем халăха çав тери хаяррăн тыткалани ку таранччен курса ирттернĕ хăрушă ĕçсенчен те хăрушăрах пулчĕ. Фашистла пуçкасакансем ялти халăха 3 пÿрте хăваласа хупрĕç те çĕр каçиччĕнех çынсене асаплантарчĕç, хĕнерĕç. Тепĕр кунне нимĕçсем яла вут тĕртсе ячĕç, пушарта 38 пÿрт хуçалăх хуралтисемпе пĕрлех тата шкул çунса кайрĕç. Прасковья Минкина, Акулина Бобкова, Андрей Минкин, Павел Федоренко, Марк Кожевников, Яким Лавриненко, Александра Воронцова тата ыттисем те чĕррĕнех çунса кайнă. Вăрмана тарса ĕлкĕрнисем анчах сăлăнса юлнă»

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Хĕрлĕ Çар генералĕсене тата офицерсен составне Суворов орденĕпе наградăласси çинчен

Житомир хулине тытса илнĕ чухне ăнăçлăн вăрçнăшăн, çавăн чухне паттăрлăх кăтартнăшăн тата лайăх маневрсем тунăшăн çаксене наградăлас:

1-мĕш степень Суворов орденĕпе

Генерал-лейтенанта Виктор Кириллович **Баранова**

II-мĕш степень Суворов орденĕпе

Полковника Вячеслав Дмитриевич **Васильева**

Полковника Хаджи-Умар Джиорович **Мамсурова**

Генерал-майора Юлион Иванович **Овара.**

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

1943 çулхи ноябрĕн 13-мĕшĕ.

Хĕрлĕ Çар офицерĕсен, сержантсен тата рядовойсен составне Совет Союз Геройĕн званине пани

Днепр шывĕ урлă ăнăçлăн каçнăшăн тата çавăн чухне хастарлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн, СССР Верховный Совет Президиумĕн çак çулхи ноябрĕн 13-мĕшĕнчи Указĕ тăрăх, Хĕрлĕ Çар офицерĕсен, сержантсен тата рядовойсен составĕн пĕр пысăк ушкăнне Ленин орденĕпе тата «Ылтăн Çăлтăр» медалĕпе наградăласа, Совет Союз Геройĕн званине панă.

Совет Союз Геройĕн званине пĕтĕмпе 72 çынна панă. (ТАСС).

ВЦСПС-па Халăх Комиссариачĕсенче

ВЦСПС-па пĕр Халăх Комиссариачĕ, Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвăн 1943-мĕш çулхи октябрь уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухса, Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводрах хăвармалла тунă тата ăна пĕррремĕш преми пама йышăннă.

* * *

ВЦСПС-па пĕр Халăх Комиссариачĕ, Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвăн 1943-мĕш çулхи октябрь уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухса, Челноков юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен завода иккĕмĕш преми пама йышăннă.

* * *

ВЦСПС-па пĕр Халăх Комиссариачĕ, Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвăн 1943-мĕш çулхи октябрь уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухса, Володин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен завода виççĕмĕш премi памалла тунă.

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсем Сталино облаçĕнчи хуласемпе ялсенче тунă тискер ĕçсем

Ноябрĕн 13-мĕшĕнче Мускавра тухакан хаçатсенче нимĕçсен фашистла захватчикĕсем тата вĕсемпе пĕр каварлисем тунă тискер ĕçсене тата вĕсем граждансене, колхозсене, государство предприятийĕсемпе учрежденийĕсене сиен тунине тĕпчесе пĕлекен Чрезвычайнăй Государственнăй Комисси нимĕçсен фашистла захватчикĕсем Сталино облаçĕнчи промышленноçа, хула хуçалăхне тата культура учрежденийĕсене çĕмĕрни çинчен пĕлтернине пичетлесе кăларнă.

Сталино облаçĕ—Совет Союзĕн металлурги тата çĕркăмрăк кăларакан чи паха центрĕ пулса тăрать.

Çавăн пекех унта лайăх йышши цемент, кĕленче, техникăлла фарфор, тăм япаласем, хĕрлĕ кирпĕч тăвасси тата çунман тăм, алебастр, гранит чулĕ тупасси анлăн саралнă пулнă.

15 институт тата сăрт-ту, металлурги, хими техникумĕсем пысăк квалификациллĕ кадрсем хатĕрленĕ.

Сталино, Горловка, Енакиево, Константиновка, Краматорск, Макеевка, Мариуполь тата ытти хуласем сталинла пятилеткăсем хушшинче культурăпа промышленноçăн пысăк центрĕсем пулса тăнăччĕ.

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсем тата вĕсемпе пĕр каварлисем, Германин верховный командованин приказĕ тăрăх, çĕркăмрăк кăларакан шахтăсене, электростанцисене тата металлурги завочĕсене, машинăсем тăвакан заводсене, культура учрежденийĕсене, шкулсене, больницăсене, театрсене, музейсене тата Донбасри хуласемпе поселоксен хуçалăхĕсене ишĕлтерсе пĕтернĕ.

Совет халăхне тискер кайăксем пек курайман пурăнакан фашистла вăрă-хурахсем вырăнти халăха хĕнесе асаплантарса вĕлернĕ, совет çыннисене нимĕç чуралăхне хăваласа кайнă.

Пĕлтерÿре нимĕçсен кăнтăрти çар ушкăнĕн хуçалăх руководителĕ çар руководителĕсемпе хуçалăх командисене промышленность предприятийĕсене, шахтăсене, электростанцисене, Донбасри заводсен çурчĕсене пĕтĕмпех ишсе хăварма, çавăн пекех тата хаклă япаласемпе оборудование Германие турттарса кайма хушакан вăрттăн инструкцирен, 1943-мĕш çулхи сентябрĕн 2-мĕшĕнче панăскертен, пĕр вырăна илсе кăтартнă.

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсем Сталино облаçĕнче хуçаланнă вăхăтра тата хăйсем каялла чакнă чухне çĕркăмрăк промышленноçне пĕтĕмпе тенĕ пекех ишĕлтернĕ чи хаклă оборудованисене Германие турттарса кайнă.

Нимĕç захватчикĕсем рабочисем пурăнакан çуртсене, клубсене, ача сачĕсене, яслисене, столовăйсене, шкулсене, больницăсене, магазинсене, канупа культура паркĕсене ишĕлтерсе е çунтарса янă.

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсем Сталино облаçĕнчи çĕркăмрăк промышленноçне, малтанлăха палăртнă тăрăх, 2 миллиард тенкĕлĕх сиен тунă.

Чрезвычайнăй Государственнăй Комисси пĕлтерĕвĕсенче фашистла захватчиксем Сталино, Краматорск, Мариуполь хулисене ишĕлтерсе пĕтерни çинчен каланă.

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсем Сталино облаçне оккупациленĕ вăхăтра вырăнти халăх валли чуралла-крепосла йĕрке туса хунă. Ĕçлеме пултаракан çынсене пурне те нимĕç каторгине хăваласа кайнă. Совет гражданĕсене пĕтерсе пырассине, çаратассине, тĕлĕнмелле ирĕксĕрлессине пур вырансенче те анлăн туса пынă, совет çыннисене темиçе пин çынна асаплантарса е персе вĕлернĕ.

Нимĕçсен фашистла оккупанчĕсем Сталино облаçне оккупациленĕ вăхăтра, персе вĕлерессине хăратса, 125.000 совет çыннине Германие хăваласа кайнă.

Чрезвычайнăй Комиссин пĕлтерĕвĕнче совет халăхне хирĕç тунă тискер ĕçсемшĕн гитлерла правительствăпа пĕрле ответ тытма тивĕçлĕ преступниксен списокне те кăтартнă. (ТАСС).

ХРОНИКА

ССР Союзĕн Верховный Совет Президиумĕ Иван Николаевич Бакулин юлташа ССР Союзĕн Афганистанри Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посолĕ пулма уйăрса лартнă.

Колхозниксен патриотла çĕкленĕвĕ

СЕНТЕР. (Хамăр корр.). Районри партипе совет активĕ Сталин юлташăн докладĕпе приказне ĕççынисене ăнлантарса парать. ВКП(б) райкомĕ ялсене 25 агитатор янă, малтан докладчиксен семинарне ирттерчĕ.

Шомик ялсоветĕнчи «Колос» колхозра Сталин юлташăн докладне тĕплĕн ăнлантарса панă. Çавăн хыççăн колхозниксен ĕçлес хастарлăхĕ татах та ÿсрĕ. Вĕсем кĕске вăхăтрах 120 центнер вăрлăх сортланă. Отечественнăй аслă вăрçăн инвалидĕ Григорий Кузнецов, хăйĕн пичченĕшĕ Илларионпа пĕрле, çак кунсенчех колхозри ялхуçалăх машинисене юсаса пĕтерме пулнă. Вĕсем куннех виçшер плуг юсаççĕ. Çавăн пекех А. Ямандеев, М. Трофимова юлташсем те вăрлăх сортланă çĕрте ăнăçлăн ĕçлеççĕ. Кунне 30-шар пăт сортлас вырăнне 45-шер пăт сортлаççĕ.

Сталин юлташăн докладне ăнлантарса парас тĕлĕшпе Пушкăрт ялсоветĕнчи колхозсенче те пухусем пулса иртнĕ. Ку ялсоветри «Родина» колхоз пур ялхуçалăх ĕçĕсене те вĕçленĕ.

Шуруç ялсоветĕнчи «Знамя труда» колхозра Сталин юлташăн докладне ноябрĕн 11-мĕшĕнче ăнлантарса панă. Агитатор малтан доклада уççăн вуласа панă, унтан ăнлантарса пама тытăннă. Отечественнăй вăрçăн юлашки çулталăкĕнчи улшăнусем çинчен каланă чухне вăл картă çинче кăтартса панă. Колхозниксем пирĕн Хĕрлĕ Çар çулталăк хушшинче çапăçса тухнă çула картă çинче пăхса кураççĕ.

Халăх фронта пулăшни çинчен калакан сынăка ăнлантарса панă чух, агитатор çак колхоз членĕсем Хĕрлĕ Çара мĕнле пулăшни çинчен чарăнса тăчĕ. «Знамя труда» колхоз кăçал ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçленĕ, государство умĕнчи обязательствăсене тыслăн пурнăçланă, государствăна аванс шучĕпе те тырă панă.

— Сталин юлташ пирĕн ĕçе тивĕçлипе хаклать. Çулпуç пире, колхоз уйхирĕнче ĕçлекенсене, мухтаса тав тăвать. Унăн мухтавĕ пире татах та тимлесе ĕçлеме хавхалантарать,—теççĕ колхозниксем доклада ăнлантарса панă хыççăн.

Сталин юлташăн докладĕпе приказĕ çине ответлесе, колхозниксем ситес çуракине кĕске вăхăтрах хатĕрленсе çитме пулчĕç. Вĕсем ĕнтĕ хăйсен сăмахне ĕçпе пурнăçлама тытăнчĕç.

Т. ИВАНОВ.

Тăшмана пуçĕпех аркатма пĕтĕм вăя хурар

КÿКЕÇ. (Телефонпа). Çак кунсенче районра партипе совет активĕн пухăвĕ пулса иртрĕ. Унта колхозсемпе ялсоветсен председателĕсем, предприятисемпе учрежденисен руководителĕсем пулчĕç. Вĕсем Сталин юлташăн докладĕне паллашнă хыççăн пĕр кăмăллă пулса çапла йышăнчĕç: нимĕç оккупанчĕсене хăвăртрах пĕтерсе тăкас тесе, паттăр Хĕрлĕ Çара пулăшассине татах вăйлатас; çак çитес кунсенчех государство умĕнчи парамсене парса татас; декабрĕн 15-мĕшĕ тĕлне пур тĕрлĕ культурăсем енĕпе те вăрлăх фондне хывса çитерес, декабрĕн 1-мĕшĕ тĕлне вăрлăхсене сортласа пĕтерес; çĕвĕ çулччен пур колхозсенче те ялхуçалăх машинисене юсаса лартас; выранти удобренисене срокченех хире кăларса çитерес.

Колхозлă ял çулпуç докладне чĕререн ырлать. Çак кунсенчех чылай колхозсем Хĕрлĕ Çара пулăшассине вăйлатрĕç, çитес çулхи вăйлă тырпулшăн тимлĕн кĕрешме тытăнчĕç. Водопьянов, Киров ячĕсемпе тăракан колхозсен членĕсем вăрлăх сортласа пĕтерне. Киров ячĕпе тăракан колхозра халĕ хĕрсех хире тислĕк кăлараççĕ. „Молния" колхоз членĕсем ноябрĕн 10-мĕшĕнче пĕр кун хушшинче фронтовиксем валли 27 мăшăр алсасемпе чăлхасем пухнă, халĕ татах пухаççĕ.

Пирĕн колхозниксем çулпуçа фронта вăйлăн пулăшса тăнипе ответлеççĕ.

Е. ОЗИКОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Çĕнĕ вăйпа

ÇЕМĔРЛЕ. (Хамăр корр.). Предприятисенчи рабочисемпе работницăсем Сталин юлташăн докладне пит хаваслăн итлерĕç.

— Сталин юлташ сăмахĕсем пире хамăр ĕçе татах вăйлатма хушаççĕ. Çулпуç сăмахĕсем çине ответлесе, эпир ĕç тухăçлăхне татах та ÿстерме пулатпăр,—теççĕ комбинатри рабочисем.

«Большевик» завод коллективĕ 5-мĕш уйăх ĕнтĕ ВЦСПС-па Çăмăл промышленность Халăх Комиссариачĕн Хĕрлĕ ялавне тытса тăрать. Октябрь уйăхĕнчи плана 114 процент ытларах тултарнă. Коллектив Сталин юлташăн докладне итленĕ хыççăн, ноябрь уйăхĕнче тата ытларах вăй хурса ĕçлеме пулчĕ.

Индношив мастерскойĕнчи рабочисем те çулпуçа çĕнĕ çĕнтерÿсемпе ответлеме пулчĕç. Стахановка Манохина юлташ октябрь уйăхĕнчи плана 223 процент тултарнă. Çак уйăхра вăл 250 процентран кая мар тултарса ĕçлеме пулчĕ.

Х. ЛИСИН.

Çулталăкри плана ноябрь уйăхĕнче тултарма пулчĕç

ЭЛЕК, ноябрĕн 14-мĕшĕ. (Телефонпа, хамăр корр.). Районри предприятисемпе промысла артелĕсен коллективĕсем Сталин юлташăн докладне тулли кăмăлпа кĕтсе илчĕç. Çулпуç фронта пулăшмашкăн тимлĕрех ĕçлеме чĕннине ответлесе, татăклă обязательствăсем илчĕç.

Çĕвĕ çĕлекен «Коммунар» артель коллективĕ октябрь уйăхĕнчи плана 118 процент тултарнă. Вăл Сталин юлташ докладне итленĕ хыççăн çулталăкри плана ноябрь уйăхĕнче тултарма сăмах пачĕ. Уйрăм рабочисем А. Алексеева, Григорьева, Васильева юлташсем çулталăкри плана 120 процентран кая мар тултарма пулчĕç.

Чугун çулсем валли вутă çителĕклĕ хатĕрлер

Фронтпа халăх хуçалăхĕн ыйтăвĕсене тивĕçтерес тĕлĕшпе чугун çул транспорчĕ умĕнче питех те пысăк задачăсем тăраççĕ. «Паллă ĕнтĕ, — тенĕ Сталин юлташ ноябрĕн 6-мĕшĕнче тунă докладра, — транспорт тылпа фронт хушшинчи сыхăнăвăн чи кирлĕ хатĕрĕ пулса тăрать. Хĕçпăшалсемпе огнеприпассем нумай туса хатĕрлеме пулать, анчах вĕсене транспортпа усă курса фронта вăхăтра çитермесен, вĕсем фронт ĕçĕшĕн усăсăр груз кăна пулса юлма пултараççĕ».

Чугун çул транспорчĕ хăйĕн умĕнчи задачăсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пымалла тăвас тесен, ун валли топливо çителĕклĕ таран хатĕрлесе памалла. Вăрçă условийĕсене пула чугун çулсем валли вутă хатĕрлес ыйту çивĕччĕн тухса тăчĕ. Ку ĕçе, тĕпрен илсен, колхозсен вăйĕпе пурнăçа кĕртмелле.

Пирĕн республикăра чылай районсенчи колхозсем чугун çулсем валли вутă хатĕрлесе турттарас плана ăнăçлăн тултарса пыраççĕ. Акă эпир паян пичетлесе тухакан сводкăра куратпăр. Анчах та, пĕтĕмĕшпе илсен, вутă хатĕрлесе турттарасси сÿрĕк пырать-ха. Çавăнпа, чи малтан, кая юлса пыракан Тăвай, Чкаловски, Шăмăршă, Хĕрлĕ Чутай, Пăрачкав, Кувакино тата ытти хăшпĕр районсем ответлă пулса тăраççĕ. Вĕсем иккĕмĕш çурçулти плана 4 уйăх хушшинче те 35 процентран ытла тултарайман.

Асăннă районсен хăйсем начар ĕçленине витме нимле сăлтавсем те çук. Сĕнтĕрвăрри, Йĕпреç, Шăхасан тата ытти хăшпĕр районсем чугун çулсем валли вутă хатĕрлесе турттарас плана ăнăçлăн тултарма ĕçпе туртăм вăйĕ те, вăхăт та çителĕклĕ тупаççĕ. Тăвай, Чкаловски, Шăмăршă тата ытти кая юлса пыракан районсен ун пек условисем çук-и мĕн? Пур, вăл районсем те вутă хатĕрлес плана вăхăтра тултарса пыма пултараççĕ. Анчах вĕсенче партипе совет организацийĕсем çĕршыв умĕнчи ответлăха туйса тимлĕн ĕçлени çитмест.

Чугун çул транспорчĕ валли вутă хатĕрлес плана тултарманни çĕршыв умĕнче айăпа кĕни пулать. Чугун çул валли вутă çителĕклĕ тăратманни фронт ыйтăвĕсене пурнăçламаннине пĕлтерет.

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи партипе совет тата колхоз активĕн канашлăвĕ Сталин юлташ докладне ответлесе чугун çул валли вутă хатĕрлес тĕлĕшпе çулталăкри плана декабрĕн 15-мĕшĕнче тултарассишĕн социализмлă ăмăрту пуçарма йышăннă. Питех те паха пуçару. Партипе совет организацисем вăл пуçарăва анлăн сарма тивĕçлĕ. Социализмлă ăмăртăва вăйлатса пырса, чугун çулсем валли вутă кирлĕ таранах хатĕрлер, транспорта тылпа фронт ыйтăвĕсене лайăх пурнăçа кĕртсе пыма пулăшар!

Республикăри районсем чугун çул валли вутă хатĕрлес тĕлĕшпе 1943 çулхи иккĕмĕш çур çулти плана ноябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне мĕнле тултарнине кăтартакан СВОДКА

Районсем	Плана тултарнă (процентпа): Турттарас енĕпе	Плана тултарнă (процентпа): Хатĕрлес енĕпе	Мĕнле вырăнта тăрать: Турттарас енĕпе	Мĕнле вырăнта тăрать: Хатĕрлес енĕпе
Сĕнтĕрвăрри	80,6	62,3	1	4
Йĕпреç	30,0	65,5	2	1
Шăхасан	65,5	60,0	3	7
Улатăр	[illegible]4,8	61,6	4	5
Вăрмар	64,3	63,8	5	2
Канаш	63,8	62,4	6	3
Çĕрпÿ	61,2	61,1	7	6
Вăрнар	[illegible]0,8	48,9	8	10
Сĕнтĕр	56,9	35,2	9	23
Комсомольски	56,0	36,0	10	22
Калинино	[illegible]4,3	42,1	11	14
Первомайски	53,8	55,8	12	9
Советски	51,7	37,8	13	18
Куславкка	50,3	44,1	14	11
Елчĕк	49,6	37,2	15	20
Шупашкар	[illegible]9,5	[illegible]8,0	16	17
Элĕк	49,4	36,4	17	21
Çĕмĕрле	[illegible]5,9	39,0	18	16
Красноармейски	44,8	40,1	19	15
Октябрьски	41,5	32,4	20	25
Етĕрне	40,5	35,0	21	24
Ишлей	35,4	37,3	22	19
Тăвай	32,5	58,6	23	8
Чкаловски	28,2	29,0	24	26
Шăмăршă	26,2	43,8	25	12
Хĕрлĕ Чутай	22,1	27,0	26	27
Пăрачкав	7,0	43,8	27	13
Кувакино	2,0	23,3	28	28

СССР орденĕсемпе медалĕсене пани

Çак кунсенче Шупашкар хулинче СССР Верховный Совечĕн депутачĕ, Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. А. Андреева юлташ наградăланă юлташсене орденсемпе медальсем пачĕ.

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешÿре Командованин заданийĕне лайăх пурнăçа кĕртнĕшĕн наградăланă кĕçĕн воентехник Алексей Алексеевич Танцюр юлташ «За отвагу» медаль илчĕ.

Унтан СССР Верховный Совет Президиумĕн 1943-мĕш çулхи сентябрĕн 20-мĕшĕнче кăларнă Указĕ тăрăх наградăланисем Чăваш АССР Шалти ĕçсен Халăх Комиссариачĕн работникĕсем: государство хăрушсăрлăхĕн полковникĕ С. Е. Белолипецкий, инженер-майор М. С. Гурарий юлташсем Хĕрлĕ çăлтăр орденĕсем, Государство хăрушсăрлăхĕн старши лейтенанчĕ С. С. Богданов, милици капитанĕ С. Т. Мижеров, государство хăрушсăрлăхĕн старши лейтенанчĕ М. П. Семенов, государство хăрушсăрлăхĕн капитанĕ Ф. В. Колбасов, государство хăрушсăрлăхĕн старши лейтенанчĕ А. А. Трефилов, государство хăрушсăрлăхĕн майорĕ Д. Т. Зарин юлташсем «За отвагу» медальсем илчĕç. Государство хăрушсăрлăхĕн старши лейтенанчĕ Я. А. Алексеев тата милицин старши лейтенанчĕ М. К. Турханов юлташсене «За боевые заслуги» медальсем панă.

Малалла З. А. Андреева юлташ Чăваш АССР государство хăрушсăрлăхĕн Халăх Комиссариачĕн работникĕсене наградăсем пачĕ. Государство хăрушсăрлăхĕн полковникне Л. Ф. Щербаков тата государство хăрушсăрлăхĕн майорне В. И. Циипилев юлташсене «Знак почета» орденне, государство хăрушсăрлăхĕн капитанне К. И. Антонов, государство хăрушсăрлăхĕн старши лейтенантне И. А. Гильмутдинов, государство хăрушсăрлăхĕн капитанĕсене Ф. И. Иванов тата И. Т. Козлов, государство хăрушсăрлăхĕн старши лейтенантне П. П. Леонович, государство хăрушсăрлăхĕн лейтенантне А. С. Сергеев юлташсене «За отвагу» медальсем пачĕ.

СССР Верховный Совет Президиумĕн 1943 çулхи сентябрĕн 17-мĕшĕнче кăларнă Указĕ тăрăх наградăланă республикăри медицина работникĕсем: Шупашкарти больницари инфекционнăй отделăн заведующийĕ А. И. Воронов юлташ «За трудовую доблесть» медаль, Çĕрпÿ районĕнчи фельдшер И. Е. Ефимов юлташ «За трудовое отличие» медаль илчĕç.

СССР Верховный Совет Президиумĕ 1943 çулхи сентябрĕн 7-мĕшĕнче кăларнă Указпа Хĕрлĕ Çара тата промышленноçпа ялхуçалăхне нефтепродуктсем тăратас тĕлĕшпе правительство заданийĕсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртнĕшĕн наградăланă Нефтесбытăн Чăваш республикинчи конторин управляющине С. Е. Заря юлташа «Знак почета» орденĕ панă.

Пысăк награда илнĕ хыççăн наградăланисен ячĕпе, партипе правительствăна тав туса, государство хăрушсăрлăхĕн майорĕ В. И. Циипилев юлташ сăмах тухса каларĕ.

Орденсемпе медальсем панă хыççăн З. А. Андреева юлташ награда илнĕ юлташсене саламларĕ тата малашнехи ĕçре çитĕнÿсем тума сунчĕ.

Ют çĕршывсенче

ИТАЛИРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, ноябрĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: 8-мĕш арми чăçĕсем, тăшман вăйлăн хирĕç тăнă пулин те, Атесса ялне тата унăн çывăхĕнчи çÿллĕ вырăна тытса илнĕ. Фронтăн ытти секторĕсенче патрульсем активлă кĕрешнĕ.

Союзниксен авиацийĕ тăшманăн çар объекчĕсене тата унăн моторлă транспорчĕпе çарĕсене атакăланă.

Эгей тинĕс районĕнче ноябрĕн 12-мĕшĕнче нимĕçсем Лерос утравĕ çине ансаларнă та ун çыранĕнче çирĕпленнĕ. Халĕ унта хаяр çапăçусем пыраççĕ. Тăшман çĕнĕрен подкреплениссем куçарса пынă.

Бадольо яланхи çар тума приказ панă

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед пресс агентствин корреспонденчĕ Неапольтен пĕлтернĕ тăрăх, Бадольо Бассо генерала итальянецсен яланхи çарне тума приказ панă. Çав çара Неаполь патĕнче кĕрешекен добровольчески чçсенчен тумалла. Бадольо çавăнпа пĕрлех Павси генералăн добровольчески çарне салатса яма приказ панă.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, ноябрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, ноябрĕн 11-мĕшĕнче союзниксен бомбардировщикĕсем Хĕвеланăç Германири тĕрлĕ объектсене атакăланă. Американецсен «Вĕçекен крепость» йышши бомбардировщикĕсем ытти объектсемпе пĕрле Мюнстер хулине те атакăланă. Малтанлăха палăртнă тăрăх, çав хулана тапăннă чухне тăшманăн 18 самолетне персе ÿкернĕ.

Англи самолечĕсен соединенийĕсем çав вăхăтрах Шербурти, Котантен çурутравĕ çинчи тата Францири ытти вырăнсенчи çар объекчĕсене тапăннă.

Англи бомбардировщикĕсем Модан чугун çул тĕвĕвне йышлăн пырса тапăннă. Модан вăл Франципе Итали чиккинче ларать. Вăл Мон-Сени туннельне кĕмелли вырăна контрольлесе тăрать. Италие Франципе çыхăнтарса тăракан икĕ чугун çултан пĕри çав туннель витĕр тухать.

ГЕРМАНИН ФРАНЦИРИ ЧАÇĔНЧИ ПĂЛХАВ

ЛОНДОН, ноябрĕн 13-меше. (ТАСС). «Дейли телеграф энд Морнинг пост» ятлă хаçат Лондонра илнĕ хыпарсем тăрăх çапла пĕлтерет: Германин Тулузăран 50 мильăра вырнаçнă чаçĕнче пăлхав пулса иртнĕ. Çав пăлхава нимĕçсен 500 салтакĕ хутшăннă. Вĕсем хăйсен унтер-офицерĕсене вĕлерсе пĕтернĕ те эсэсовецсен çарĕсемпе хаяррăн çапăçнă. Çав пăлхав командовани вăл чаçа Совет Союзĕпе Германи фронтне яма приказ панă пирки пуçланса кайнă.

Пăлхав пуçласа янă салтаксемпе эсэсовецсем хушшинчи çапăçура икĕ енĕпе те аманнисемпе вилнисем пулнă. Çавăн пекех гражданла халăх хушшинче те çухатусем пур.

ЛИВАНРИ ЛАРУ-ТĂРУ

ЛОНДОН, ноябрĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонра илнĕ хыпарсем тăрăх, ноябрĕн 11-мĕшĕнче Ливан правительствипе Франци влаçĕсем хушшинче хирĕçÿ тухса кайнă.

Ливан правительствин руководителĕсем Ливан конституцийĕнчен Франция Ливана тытса тăма мандат илни çинчен калакан пунктсене кăларса пăрахма йышăннă (Франция Ливанпа Сирие тытса тăмалли мандата иртнĕ вăрçă хыççăн илнĕ).

Çакăн пирки ноябрĕн 11-мĕшĕнче, Франци халăхне ирĕке кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен комитетăн генеральнăй делегачĕ Жан Элле хушнă тăрăх, Ливан правительствин президентне, министрсен совечĕн председательне тата правительствăн ытти членĕсене те арестленĕ.

ЛОНДОН, ноябрĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англин официальнăй ушкăнĕсем Ливанри лару-тăру пирки пичетлесе кăларнă заявленипе çапла каланă: «Франци влаçĕсем ноябрĕн 11-мĕшĕнче ирхине Ливанра тунă ĕçсене Англи влаçĕсене пĕлтермесĕр, вĕсемпе канашламасăр тунă. Ноябрĕн 11-мĕшĕнче Англин Бейрутри посланникĕ Спирс генерал Франци халăхне ирĕке кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен комитет делегатне çавăн пирки протест панă».

АЛЖИР, ноябрĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Франци халăхне ирĕке кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен комитет «хальхи лару-тăрăва татса пама» Катру генерала Бейрута янă.

ТĂШМАНĂН ПОДВОДНĂЙ ЛОДКИСЕМПЕ КĔРЕШЕС ĔÇ МĔНЛЕ ПЫНИ ÇИНЧЕН ЧЕРЧИЛЛЬПЕ РУЗВЕЛЬТ ПĔРЛЕ КАЛАСА ПАНИ

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Лондонпа Вашингтонра шыв айĕнчи вăрçă çинчен Черчилльпе Рузвельт пĕрле каласа панине пичетленĕ.

Юлашки 6 уйăх хушшинче, тенĕ вĕсем, тăшманăн 150 подводнăй лодкине ытла путарнă.

Август, сентябрь тата октябрь уйăхĕсенче тăшманăн подводнăй лодкисене вăл хăй союзниксен суту-илÿ суднисене путарнинчен ытларах путарнă. Çак тĕлĕшрен октябрь уйăхĕ вăрçă пуçланнă хыççăнхи уйăхсенчен чи лайăххи пулнă. Октябрь уйăхĕнче союзниксен суднисем питĕ сахал пĕтнĕ. Нимĕçсен подводнăй лодкисем халь çĕнĕ йышши хĕçпăшалпа усă кураççĕ пулин те тата çĕнĕ тактика сÿйласа илнĕ пулин те, союзниксен çÿрекен суту-илÿ суднисен хисепĕ ÿснĕ.

«Çапăçу халь пĕтĕм вăйпа пырать»,—тенĕ Черчилльпе Рузвельт.

Тăшманăн 150 подводнăй лодкине путарни çав 6 уйăх хушшинче вĕсен 6.000 çынлă экипажĕ пĕтнине пĕлтерет, тенĕ заявленире.

Иртнĕ вăрçăн тăватă çулталăкĕ хушшинче союзниксем тăшманăн 307 подводнăй лодкине кăна путарнăччĕ, хальхи вăрçăн тăватă çулталăкĕ хушшинче тăшманăн 700 е 800 лодкине путарнă ĕнтĕ. (ТАСС).

США СЕНАТĔНЧЕ ВĂРÇĂ ХЫÇÇĂНХИ ПОЛИТИКА ÇИНЧЕН КАЛАКАН РЕЗОЛЮЦИЕ СÿТСЕ-ЯВНИ

Октябрь уйăхĕн вĕçĕнче США сенатне вăрçă хыççăнхи ыйтусем тĕлĕшпе резолюци йышăнма сĕннĕ. Çав резолюцие сенатăн ют çĕршыв ĕçĕсене пăхакан комиссийĕ çирĕплетнĕ, вара ăна çав комисси председателĕ Коннэли сената тăратнă.

Резолюцие йышăнма сĕннĕ сенатор Карауэй çапла каланă: çав предложение йышăннипе конгресс пĕтĕм истори умĕнче, пĕтĕм тĕнче умĕнче хăй коллективлă хăрушсăрлăх принципĕсене кăмăлланине кăтартса парĕ, тенĕ.

Ют çĕршыв ĕçĕсен виçĕ министрĕн Мускавра пулса иртнĕ конференцийĕн решенийĕсене пичетлесе кăларнă хыççăн сенатра нумайĕшĕ Коннэли резолюцине Мускаври декларацин сăмахĕсемпе улăштарма тăрăшаççĕ.

Ноябрĕн 3-мĕшĕнче сенатăн ют çĕршыв ĕçĕсен комиссийĕ çав резолюцие пĕтĕмĕшле хăрушăсăрлăх пирки тăватă государствăн декларацийĕнче каланă пек улăштарнă та вара ăна йышăннă. Çав резолюцире вăрçа мĕн çĕнтериччченех туса пымалли çинчен тата Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен вăрçăри юлташĕсемпе пĕрле тĕрĕс те хисеплĕ мир туса хурас тĕлĕшпе ĕçлемелли çинчен каланă. Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсем, тенĕ резолюцире, ирĕклĕ тата никама пăхăнман нацисемпе пĕрре агрессие сирсе яма тата пĕтĕмĕшле мире сыхлама пултаракан власть туса хурас тата ăна пăхса усрас ĕçе хутшăнаççĕ. Сенат кĕске вăхăтрах тĕнчери мирпе хăрушсăрлăха сыхласа тăмалли пĕтĕм тĕнчери организаци тума кирлине йышăнать, çав организацие ăна мире юрататакан государствăсем пурте пĕртан пулса тăнă принциппа тумалла.

Резолюцие сасăланă чухне ун майлă 90 сенатор, ăна хирĕç 6 сенатор сасăланă. Юнайтед пресс агентстви шухăшĕпе, çак резолюцие йышăнни—«24 çул каярах Нацисен Лигине хирĕç сасăланă сенатăн позицийĕ халь историлле улшăнни» пулса тăрать.

Пренире тухса каланă сенатор — демократ Лукас (Иллинойс штатĕнчен) каланă тăрăх, Мускаври декларацин статьине кĕртиччен резолюци Америка халăхĕн шухăшне кăтартса тăнă, Мускаври декларацин статьине кĕтнĕ хыççăн вăл ĕнтĕ американец, вырăс, акăлчан тата китай халăхĕсен шухăшне уççăн кăтартса парать. (ТАСС).

США-па СССР ПĔР-ПĔРИНПЕ ДИПЛОМАТИЛЛĔ ÇЫХĂНУ ТЫТМА ПУÇЛАНĂРАНПА 10 ÇУЛ ÇИТНĔ МАЙ США-РА МИТИНГСЕМ ПУЛСА ИРТНĔ

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). США-па СССР пĕр-пĕринпе дипломатиллĕ çыхăну тытма пуçланăранпа 10 çул çитнĕ май тата Октябрьти социализмлă аслă революци 26 çул тултарнă май США-ри тĕрлĕ хуласенче 50 митинг пулса иртнĕ. Вĕсене Америкăпа Совет Союзĕ хушшинчи туслăхăн наци совечĕ организациленĕ.

КОРДЭЛЛ ХЭЛЛ КАЛАНИ

ВАШИНГТОН, ноябрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). США-н государственнăй секретарĕ Хэлл Вашингтонри аэродрома пырса çитнĕ. Ăна унта Рузвельт саламланă. Хэлл хаçат-журналсен представителĕсене çапла каланă:

«Эпир ют çĕршывсенче пулнă чухне пире ытти та юратса, çав тери тараватлă пăхрĕç. Мускаври конференци икĕ эрне хушши пĕр çемье пек ĕçлерĕ, пурте пĕр-пĕрне ăнланса, пĕр-пĕринпе туслă пулса, пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлерĕç. Эпир пĕтĕм тĕнчере пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлемелли тĕп программа тĕлĕшпе калаçса татăлтăмăр. Çав программăра тĕнĕл держависене çĕнтерессине хăвăртлатмалли çинчен, çавăн пекех тата вăрçă хыççăн мире сыхласа тăмалли çинчен тата пĕтĕм тĕнчере çынсене лайăхрах пурăнма пулăшасси çинчен каланă. Эпĕ çапла шухăшлатăп: пирĕн çĕршывăн тата мире юрататакан ытти çĕршывсен те Мускаври конференцире çырса хатĕрленĕ политика программипе усă курма питĕ пысăк майсем пур. Вĕсем çав майсемпе усă курĕç тесе эпĕ хытă шанса тăратăп».

ПĔРЛЕШУЛЛĔ НАЦИСЕНЕ ПУЛĂШСА ÇĔНĔРЕН УРА ÇИНЕ ТĂРАТАС ТĔЛĔШПЕ ĔÇЛЕКЕН АДМИНИСТРАЦИ СОВЕЧĔН ПĔРРЕМĔШ СЕССИНЕ УÇНИ

АТЛАНТИК СИТИ, ноябрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Ноябрĕн 10-мĕшĕнче кунта Пĕрлешÿллĕ нацисене пулăшса çĕнĕрен ура çине тăратас тĕлĕшпе ĕçлекен администраци совечĕн (Юнрра) пĕрремĕш сессийĕ уçăлчĕ. Сесси уçнă чухне совет членĕ, США делегачĕ — государственнăй секретарĕн помощникĕ Ачесон сăмах каларĕ.

БОЛГАРИРИ ХУМХАНУСЕМ

АЛЖИР, ноябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Алжирти радио «Дейли мейл» хаçатăн Анкарари корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, çапла калать: Болгарин кăнтăр-хĕвелтухăç пайĕнче чылай хуласенче пысăк хумханусем пулса иртнĕ. Хальхи влаçа хирĕç сиксе тăнă халăх Болгарин премьер-министрне тата министрсен пĕтĕм кабинетне вырăнтан тухма ыйтнă. Халăхпа салтаксем хушшинче пулса иртнĕ тытăçусенче 400 салтакпа полицейские вĕлернĕ. Влаçсем хирĕç тăнă халăха наказани пама тытăннă, нумай çынна тыта-тыта хупнă.

БОЛГАРИРЕ ГЕРМАНИ ЭШЕЛОННЕ СИРПĔНТЕРСЕ ЯНĂ

ЛОНДОН, ноябрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Софияпа Пловдив хушшинчи чугун çул çинче Германин танксем турттарса пыракан эшелонне сирпĕнтерсе янă. Нимĕçсем станцире ĕçлекен виçĕ болгар мастерне тата кĕçĕнтерех темиçе чиновника арестленĕ.

Агентство каланă тăрăх, çак ĕç вăл Болгарире нимĕçсен çар поезне пĕрремĕш хут тапăнни пулнă.

Чăваш АССР Прокуратуринче

Чугун çул валли вутă хатĕрлемелли плана тата вутă хатĕрлеме ĕç вăйĕ мобилизацилессине пурнăçа кĕртменшĕн, халăха ĕçе мобилизацилес тĕлĕшпе закон кăтартнă йĕркесене пăснăшăн Тăвай райсовет исполкомĕн председателĕ пулнă Федорова уголовнăй йĕркепе айăпласçĕ. Следстви пĕтнĕ, ĕçе пăхса тухма Чăваш АССР Верховный судне панă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Пур ухутниксене те çакăн çинчен пĕлтеретпĕр:

Чăваш АССР Совнаркомĕ кăçалхи октябрĕн 15-мĕшĕнче йышăнна 1374-мĕш №-лĕ постановлени тăрăх, 1943 — 44 çулхи ухута сезонĕ çак ноябрь уйăхĕн 1-мĕш числинче пуçланчĕ, çав чысларан пуçласа шурă тата хура пăсара, шурă мулкачăпа русак мулкача тата тилĕ тытма юрать, сăсарсене çак ноябрь уйăхĕн 15-мĕшĕнчен пуçласа тытма ирĕк панă.

Ухутниксене е кайăк тирне пырса паракансене çав пина тирсемшĕн укçасăр пуçне кашни пĕр тенкĕ пуçне çакăн пек таварсем параççĕ:

1) мамăклă тир тĕлĕшпе: 80 грамм çăнăх, 4 грамм кĕрпе тата 22 пуслăх эрех; юс, сăсар, пăсара тирĕсем тĕлĕшпе кашни пĕр тенкĕ пуçне 100 грамм çăнăх, 6 грамм кĕрпе тата 33 пуслăх эрех;

2) колхоз фермисенче ÿстерсе çитĕнтернĕ кайăксемпе кролик тирĕсемшĕн малта асăннă мамăклă тир тĕлĕшпе тунă тĕп нормăн 20 процентĕ чухлĕ параççĕ.

3) тир тумалли чĕртавар тĕлĕшпе кашни пĕр тенкĕ пуçне 3 грамм супăнь тата 30 пуслăх эрех.

Ухутниксем, мамăклă тир пама хуçалăх договорĕсем тăрăх, мамăклă тирсене тата тир тумалли чĕртавара районсенчи хатĕрлев конторисене, ларексене тата „Заготживсырье" агенчĕсене парăр.

„Заготживсырьен" республикăри конторин адресĕ çапла: гор Чебоксары, ул. Ленина, 31.

„ЗАГОТЖИВСЫРЬЕН" ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧИ КОНТОРИ

„КАРТОЧНОЕ БЮРО ПРИ НКТ" тесе çырнă çавракă сургуч пичетне, çухалнă пирки, тĕрĕс мар тесе шутламалла.

РЕСПУБЛИКĂРИ КАРТБЮРО.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23

НТ 1873 Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 Ф. б. 53 84 п. л.